**Пыл хурчĕ пулăшрĕ**

Пĕчĕк Петюк уçланкăра йĕрсе ларать. Епле макăрас мар-ха: Çырла пуçтарнă чухне аппăшĕ ăна пилĕк çырла çеç пачĕ, ыттисене пурака ячĕ.

– Ĕ -ĕ! Эпĕ çакăн чухлĕ çырла çиесшĕнччĕ,– ӳлет Петюк икĕ алăри пĕрнисене кăтартса.

Куштан Петюка ĕçчен пыл хурчĕ асăрхарĕ.

– Пыл пурр! Çырларан тутлăраххи! Çиес килсен эпĕ ĕçленине курр! – терĕ нăрла-нăрла.

Петюк ырми-канми хурта тĕлĕнсе сăнарĕ: «Епле ывăнмасть-ха вăл. Ĕçлет те ĕçлет. Никам парасса та кĕтсе лармасть». Самантрах куштанран ĕăчен ача пулса тăчĕ.

– Пĕлетĕп-пĕлетĕп, Нăрнăруш! Эсĕ пыл пухатăн. Пылне пĕчĕк чĕресе хуратăн, – терĕ Петюк хавасланса.

– Эсĕ те хурр! Эсĕ те хурр! – пулчĕ хурав.

– Ăçта?

– Ăçта пултаратăн – çавăнта!

Пăхать Петюк – çывăхра хурăн каска выртать. Самантрах мĕн тумаллине тавçăрчĕ. Чупса пычĕ те хурăн хуппине вистесе илчĕ. Вăр! çаварчĕ хăйăка, кăр! кăшăлларĕ кăшăла – савăт пулчĕ те. Пурак-ши, чĕрес-ши ку – пĕлме çук. Çапах та усă курма юрăхлă.

Пыл хурчĕпе Петюк ăмăртмалла ĕçе пикенчĕç. Нăрнăруш чечек патне пырать те пыл сăрăхтарать. Петюк вара пултараймасть.

«Эпĕ мĕнрен кая! Кăпшанкăран намăс», – хĕремесленчĕ ача. Сасартăк чечек çумĕнчех хĕрлĕ чăмакка ларнине асăрхарĕ вăл. «Пыл мар тăк – çырла пухмалла!» – мĕлтлетрĕ шухăш. Хĕрлĕ-кĕрен çаврашкасем пĕрин хыççăн тепри пуракалла куçма пуçларĕç.

Нумай пулчĕ-и, сахал-и, Анюк аппăшĕ чупса пычĕ.

– Вăт, Петюк, маттур ача! Манран нумайрах çырла пухнă, – тĕлĕнчĕ вăл.

– Мана пыл хурчĕ пулăшрĕ, – ĕçлĕн хуравларĕ Петюк.

*Ишентей, Н. Пыл хурчĕ пулашрĕ : [калав] / Н. Ишентей // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 412.*